Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

*59 (8020) №* ✻ *Шăмат кун, 2012 çулхи çурла (август) уйăхĕн 4-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

**Республика Пуçлăхĕ М. Игнатьев Муркаш районĕнче пулчĕ**

## «Пĕр тăваткал метр çĕр лаптăкĕ те пушă выртмалла мар»

Иртнĕ кĕçнерни кун пирĕн районта Республика Пуçлăхĕ М. Игнатьев пулчĕ. Чи малтанах вăл ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе тĕллевлĕ усă курнипе е курманнипе кăсăкланса Катькас ял тăрăхĕнчи «Кадикасинский» СПОК çĕрĕ çинче пулчĕ.

Кунта çакна каласа хăвармалла. Асăннă кооператива 2007 çулта регистрациленĕ. 3 çул çĕре арендăна илсе усă курнă хыççăн иртнĕ çул ăна харпăрлăха куçарнă. Анчах харпăрлăх хуçи унпа эффективлă усă курманни палăрать. 118 гектар çĕртен пĕр пайĕ мăянпа ытти çум курăк айĕнче выртать. СПОК ертӳçи В. Кольцов каланă тăрăх пушă выртакан лаптăк 7 гектар çеç имĕш. Республика Пуçлăхĕ М. Игнатьев çĕрпе эффективлă усă курманнине, харпăрлăх хуçи ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрпе урăх тĕллевпе усă курма хăтланнине критикăлла хак пачĕ.

Михаил Васильевич çак усă курман çĕрсемшĕн вырăнти бюджета мĕн чухлĕ укçа килнипе кăсăкланчĕ. Шел пулин те, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. Лебедев каланă тăрăх, пĕр пус та килмен. «Кашни тăваткал метр çĕр лаптăкĕ усă куракан çĕрсен çаврăнăшĕнче пулмалла, çав кашни тăваткал метр çĕршĕн налук тӳлемелле», – терĕ республика Пуçлăхĕ.



Çĕршĕн тӳлекен налук вырăнти бюджета пысăклатмалли çăл куç пулнине палăртрĕ. Çĕрпе тĕллевлĕ усă курманнишĕн вырăнта ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем яваплă пулса тăнине палăртрĕ. Арендăна е харпăрлăха илнĕ çĕрсем пушă выртни те ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем халăхпа тачă çыхăнса ĕçлеменни çинчен каланине палăртрĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев каланă пек, çынсемпе уйрăммăн ĕçлемелле, мĕншĕн тесен вырăнти пуçлăх ялти кашни çыннах паллать, унăн мĕн чухлĕ çĕр пулнине пĕлет.

Ун хыççăн республика Пуçлăхĕ Ильич яч. хис. хуçалăхра **(сăн ӳкерчĕкре)** пулчĕ. Кунта вăл вырма епле пынипе паллашрĕ. Тӳрех унта хутшăнакансен ĕç условийĕсем çинчен ыйтрĕ. Хуçалăх ертӳçи И. Николаев каланă тăрăх кăçал тырăпа улăм хушса памаççĕ, йăлтах укçан тӳлеççĕ. 1,5 пин тонна тырă çапса тĕшĕленĕшĕн комбайнерсем 98 пин тенкĕ укçа илеççĕ. Михаил Васильевич çакăн çинчен «хир карапĕсен» хуçисем пĕлнипе пĕлменнине наччас тĕрĕслесе илчĕ. Олег Григорьев комбайнер каланă тăрăх лайăх ĕçлесен 100 пин тенкĕ ытларах та ĕçлесе илме пулать. Юрий Мадиков водитель те кăмăллă ĕç условийĕсемпе.

Пĕтĕмпе вара кăçал вырмана хуçалăхра 3 комбайн хутшăнать. Игорь Васильевич каланă тăрăх техникăн 90 процентне çĕнетнĕ.

Республика Пуçлăхĕ çунтармалли-сĕрмелли материалсем çителĕклĕ пулнипе интересленчĕ. Çăмăллатнă хакпа паракан топливăна кунта июльте 25 тонна илсе килнĕ, августра тепĕр 10 тонна пулать. Вырма валли ку çитмелле. Михаил Васильевич кăçал Купăрля тăрăхĕсем юнашарти хуçалăхăн 80 гектар çĕрне ĕçе кĕртнине те ырларĕ. Вăл ял ĕçченĕсене вырмана ăнăçлă иртterме ырă сунчĕ.

Çак кун Михаил Васильевич Муркаш шкулĕнче пулса унта çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнипе паллашрĕ.

Ун умĕн вара район администрацийĕн ларусем ирттермелли пĕчĕк залĕнче çĕрпе эффективлă усă курассипе канашлу ирттерчĕ. **(Тĕплĕнрех 2-мĕш стр. – редакци).** Унта министрсемпе хăш-пĕр районсен администрацийĕсен пуçлăхĕсем, пирĕн районти ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем хутшăнчĕç. Канашлу çинчен тĕплĕ калаçу пуçличчен çакна каласа хăварни вырăнлă. Республика пуçлăхĕ М. Игнатьев Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев районти ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе тĕллевлĕ усă курнине е курманнине тĕрĕслес енĕпе тăвакан утăмсене ырларĕ, çакă çĕрпе эффективлă усă курассинче йĕрке тума май парассине палăртрĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**
**Н. ПАВЛОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Район уй-хирĕсенче**

## Вырма вăй илет

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче ĕнерхи кун тĕлне тĕш тырă культурисене 962 гектар çинче вырса çапнă. Ку вăл планпа пăхнин 7 процентĕ пулать. Çак вăхăта вырма ĕçĕсене 14 хуçалăхра тытăннă. «Оринино» (105 гектар), Суворов яч. хис. (200 гектар), Чкалов яч. хис. (90 гектар) хуçалăхсенче, «ВаСем» обществăра (100 гектар), А.Н. Пихтеровăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче (90 гектар) тыр-пул пухса кĕртес ĕçсене аван йĕркеленĕ. 15 хуçалăхра вырмана тухман-ха.

Кĕрхи тулă 606 гектар (39 процент), ыраш 156 гектар (52 процент) вырнă.

Ильич яч. хис. хуçалăхра (30 гектар), «ВаСем» обществăра (50 гектар) комбайнсем тулă пуссисенче те ĕçлеççĕ.

Пĕтĕмпе 1361 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ. Хальлĕхе тухăç гектар пуçне вăтамран 14,15 центнерпа танлашать.

«Восток» (62 гектар), Ильич яч. хис. (35 гектар), «Оринино» (105 гектар), Суворов яч. хис. (8 гектар), Чкалов яч. хис. (90 гектар) хуçалăхсенче, «ВаСем» обществăра (37 гектар), «Колос» обществăра (20 гектар), В.В. Бархаткинăн (10 гектар), А.Н. Пихтеровăн (90 гектар) хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче улăма пухса тирпейлессине йĕркеленĕ.

Ĕнерхи кун район уй-хирĕсенче 19 комбайн ĕçленĕ.

Çак вăхăта нумай çул ӳсекен курăксене 6466 гектар (97 процент), пĕр çул ӳсекен курăксене 1366 гектар (78 процент) çулнă, утă 4949 тонна (90 процент), сенаж 14073 тонна (84 процент), силос 4265 тонна (22 процент) хатĕрленĕ, витаминлă курăк çăнăхĕ 70 тонна авăртнă.

**Саламлатпăр**



Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертӳçине **Павел Геннадьевич ЕФИМОВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чи ăшă сăмахсемпе чун-чĕререн саламлатпăр. Эсир Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхшăн вăй хурса ĕçленине çулсерен туятпăр. Кашни çыннăн чун-чĕрине ăнланма тăрăшатăр. Эсир хуçалăхшăн – шанчăкпа тĕрек. Тавах сире хăвăр ĕçе чунтан юратса вăй хунишĕн. Малашне те сирĕн ĕçлес тесех ĕçлемелле пултăр, чăтăмлăх, ĕçлес вăй-хал чун-чĕрере çăл куç пек тапсах тăтăр. Çавна пурнăçлама çирĕп сывлăх, çемьере килĕшӳ, ăнлану, юрату пултăр. Кунçулу вăрăм та телейлĕ пултăр.

**Саламлаканĕсем: хуçалăх специалисчĕсем тата ĕçченĕсем.**

Коллектив МУП ЖКХ «Моргаушское» сердечно поздравляет охранника полигона ТБО **ЕФАНОВА Данила Ивановича** с юбилеем.

Кипит работа повседневно,
Но вот среди обычных дней
Вдруг наступает день рожденья,
Чудесный праздник – юбилей!

Хотим Вам пожелать удачи,
Успеха в жизни, ярких дел,
Чтоб Вы с улыбкой – не иначе
Встречали каждый новый день!

## Ĕççие ăнăçлă ирттерме

**Хушу**

Тыр-пул пухса кĕртес ĕçсене пахалăхлă та агротехникăпа пăхнă кĕске тапхăрта туса ирттерес тĕллевпе район администрацийĕн пуçлăхĕ августăн 1-мĕшĕнче 401 № хушу кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн августăн 2-мĕшĕнчен тытăнса сентябрĕн 7-мĕшĕччен тыр-пул пухса кĕртес ĕçсене хутшăнакан механизаторсем, уй-хир бригадисем хушшинче конкурс ирттерме палăртнă.

Çĕнтерӳçĕсене кашни эрне итогĕсемпе палăртĕç. Итогсене пĕтĕмлетнĕ чухне агротехника тата пушар хăрушсăрлăхĕн требованийĕсене, хăрушсăрлăх техникине, ĕç дисциплинине пăхăннине те шута илĕç.

Вырмана хутшăнакан комбайнерсем хушшинче çĕнтерӳçĕсене палăртма РФ Ял хуçалăх министерстви сĕннипе тĕш тырă пухса кĕртмелли комбайнсен маркисене кура ятарлă коэффициентсемпе усă курма, кăтартусене условлă единицăсем çине куçарма палăртнă:

| | |
|---|---|
| СК-5М «Нива» | – 0,88 |
| «Енисей-1200-1» | – 0,96 |
| «Нива-Эффект» | – 1,0» |
| Енисей-954» | – 1,13 |
| КЗС-7 «Полесье» | – 1,25 |
| «Vector-410» | – 1,38 |
| GS-812 «Полесье» | – 1,60 |
| «Енисей-960» | – 1,65 |
| «Дон-1500» | – 1,70 |
| «Acros-530» | – 1,74 |
| «Acros-580» | – 1,77 |
| КЗС-1218 «Полесье» | – 2,29 |

Призлă вырăн йышăннисене 1-мĕш вырăншăн 1000 тенкĕ, 2-мĕш вырăншăн 800 тенкĕ, 3-мĕш вырăншăн 500 тенкĕ тата свидетельствăсем пама пăхнă.

Итогсене çак тапхăрта пĕтĕмлетеççĕ: августăн 2–8 мĕшĕсемшĕн – августăн 9-мĕшĕнче, августăн 9–15-мĕшĕсемшĕн – августăн 16-мĕшĕнче, августăн 16–22-мĕшĕсемшĕн – августăн 23-мĕшĕнче, августăн 23–29-мĕшĕсемшĕн – августăн 30-мĕшĕнче, августăн 30-мĕшĕ – сентябрĕн 5-мĕшĕсемшĕн – сентябрĕн 6-мĕшĕнче.

Сентябрĕн 7-мĕшĕнче «Вырма–2012» конкурс итогĕсене пĕтĕмĕшле пĕтĕмлетеççĕ. Призлă вырăн йышăннă механизаторсене премисем (свидетельствăсем), «Вырма–2012» эмблемăсем ĕç вырăнĕнче параççĕ.

**Тĕш тырă пухса кĕртнин итогĕсемпе çакăн пек премисем пама çирĕплетнĕ:**

1-мĕш вырăншăн – 3000 тенкĕ, 1-мĕш степень диплом, «2012 çулхи вырман чи лайăх комбайн экипажĕ» чемпион хăйăвĕ.

2-мĕш вырăншăн – 2500 тенкĕ, 2-мĕш степень диплом.

3-мĕш вырăншăн – 2000 тенкĕ, 3-мĕш степень диплом.

**Водительсем хушшинче 9 уйăх итогĕсемпе:**

1-мĕш вырăншăн – 1500 тенкĕ, 1-мĕш степень диплом, «2012 çулхи чи лайăх водитель» чемпион хăйăвĕ.

2-мĕш вырăншăн – 1000 тенкĕ, 2-мĕш степень диплом.

3-мĕш вырăншăн – 800 тенкĕ, 3-мĕш степень диплом.

**Трактористсем хушшинче 9 уйăх итогĕсемпе:**

1-мĕш вырăншăн – 1500 тенкĕ, 1-мĕш степень диплом, «2012 çулхи чи лайăх тракторист» чемпион хăйăвĕ.

2-мĕш вырăншăн – 1000 тенкĕ, 2-мĕш степень диплом.

3-мĕш вырăншăн – 800 тенкĕ, 3-мĕш степень диплом.

**Вăрлăх сортласа çĕнетекен, тасатакан звеносем хушшинче:**

1-мĕш вырăншăн – 1500 тенкĕ (кирлĕ таран вăрлăха 2012 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕччен кондицие лартсан), 1-мĕш степень диплом, «2012 çулхи чи лайăх звено» куçса çӳрекен вымпел.

2-мĕш вырăншăн – 1200 тенкĕ (кирлĕ вăрлăхăн 95 процентне 2012 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кондицие лартсан), 2-мĕш степень диплом.

3-мĕш вырăншăн – 1000 тенкĕ (кирлĕ вăрлăхăн 90 процентне 2012 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кондицие лартсан), 3-мĕш степень диплом.

**Уй-хир бригадисем хушшинче 9 уйăх итогĕсемпе:**

1-мĕш вырăншăн – 2000 тенкĕ, 1-мĕш степень диплом, «2012 çулхи чи лайăх уй-хир бригади» куçса çӳрекен вымпел.

2-мĕш вырăншăн – 1500 тенкĕ, 2-мĕш степень диплом.

3-мĕш вырăншăн – 1000 тенкĕ, 3-мĕш степень диплом.

**Механизациленĕ бригадăсем хушшинче:**

1-мĕш вырăншăн – 2000 тенкĕ, 1-мĕш степень диплом, «2012 çулхи чи лайăх механизациленĕ бригада» куçса çӳрекен вымпел.

2-мĕш вырăншăн – 1500 тенкĕ, 2-мĕш степень диплом.

3-мĕш вырăншăн – 1000 тенкĕ, 3-мĕш степень диплом.

Конкурс итогĕсене пĕтĕмлетме комисси йĕркеленĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ-район администрацийĕн экономика, агропромышленноç комплексне аталантарассин тата муниципаллă харпăрлăх управленийĕн пуçлăхĕ В.К. АНАНЬЕВ ертсе пырать.

Республика Пуçлăхĕ М. Игнатьев Муркаш районĕнче пулчĕ

# Çĕрпе саккунлă тата тухăçлă усă курмалла



Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев районти ĕç-хĕлпе паллашнă хыççăн район администрацийĕн ларусен пĕчĕк залĕнче пĕрлехи канашлу ирттерчĕ.

**УЯВ КĂНА МАР, ХУШМА ИНВЕСТИЦИ ТЕ**

Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Путин 2019 çулта Шупашкар хулине йĕркеленĕренпе 550 çул çитнине тата 2020 çулта Чăваш автономи облаçне тунăранпа 100 çул çитнине уявласси пирки указ кăларнă. Çак указпа килĕшӳллĕн Раççей регионĕсенчи патшалăх влаçĕн органĕсен тата выранти хăй тытăмлăх органĕсен асăннă уява ирттерме хатĕрленмелле, унта хутшăнмалла.

– Çакă вăл ахаль уяв кăна мар. Асăннă указ Чăваш Республикин экономикăпа социаллă аталанăвне пысăк витĕм кӳрĕ, хушма инвестици пирĕншĕн питĕ выранлă пулĕ, – терĕ Михаил Игнатьев канашлăва хутшăннисене.

**УСĂ КУРМАН ÇĔРСЕНЕ ПУСĂ ÇАВРĂНĂШНЕ ЫТЛАРАХ КĔРТМЕЛЛЕ**

Кун йĕркинче пăхса тухма палăртнă ыйтăва Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов тăсрĕ. Вăл усă курман çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртес ыйту çинче чарăнчĕ. Республикăра пĕтĕмĕшле 2008 – 2011 çулсенче 111, 9 пин гектар çĕрпе çак тĕллевпе усă курнă. Акмалли-лартмалли çĕр лаптăкне усă курман уй-хирте агротехника ĕçĕсем ăнăçлă ирттернипе Вăрнар, Комсомольски, Елчĕк районĕсем палăрмаллах ӳстернĕ.

– Муркаш районĕ вара ку енĕпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Çине тăрса ĕçлес выранне акмаллилартмалли лаптăка самай пĕчĕклетнĕ, – терĕ Сергей Павлов çитменлĕхе çитес вăхăтра пĕтермеллине палăртса.

Усă курман çĕре пусă çаврăнăшне кĕртес ĕçре тăкакланнин 50 процентне республика тата район бюджечĕсенчен саплаштараççĕ. Уй-хире çĕнĕ сăн-сăпат кĕртнин тĕллевĕ тупăш илессин ӳсĕмĕнче пулмалла. Апла пулсан ку ыранхи куна çивĕч куçпа пăхни, енчен те ĕç-хĕл саккунпа килĕшӳллĕ пулсан.

Тĕрлĕ категориллĕ çĕр пур, çавна май кашнине хăй тĕллевĕпе усă курмалла. Çакна саккун çирĕп ыйтать. Ял хуçалăх тĕллевлĕ çĕр вара тыр-пул, пахча çимĕç ӳстермелли кăна. Унта ниепле те çурт-йĕр çĕклеймĕн, усă курмасăр «вăрман» е çум курăк çитĕнтереймĕн.

Çĕр хутшăнăвĕн рынокĕнче тĕрлĕ пăтăрмах тĕл пулать, вăл шутра Муркаш районĕнче те. Çĕр лаптăкне сутма-туянма вара парнеленине çирĕплетекен тата шанăç документчĕпе анлă усă кураççĕ. Чылай чухне ватă çынсем улталанаççĕ, çакна суту-илӳ ĕçĕ вĕçне тухсан кăна ăнланаççĕ. Çапла вара ку енĕпе спекуляци тăвакансем ял хуçалăх тĕллевлĕ çĕре тĕрлĕ тĕлĕшпе хаклă хакпа сутаççĕ. Палăртса хăвармалла, ултавлă документăн пĕрремĕш утăмĕ ытларах чухне ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсенчен тухать.

– Ял хуçалăх çĕрĕпе тĕп тĕллевпе усă курнине чи малтан сирĕн, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен, тĕрĕслемелле. Вăл хăш категорипе пынине, уй-хирте кам ĕçленине тата ĕçлеменнине эсир куратăр, отчетпа çирĕплететĕр. Выррăнсенче вара мĕншĕн çакăн пек йĕркесĕрлĕх хуçаланать? Çак ĕç-хĕлте коррупци сĕмĕ те курăнать, – хăй пăшăрханăвне пытармарĕ республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев.

Çĕрпе тĕллевсĕр усă куракансем пирки пухнă материала район администрацийĕ «Россельхознадзор» управленине тăратнă. Ответлăха çухатнă арендаторсем çитес вăхăтра явап тытĕç.

**ÇĔР ЛАПТĂКĔПЕ УСĂ КУРТĂН – НАЛУКА ВĂХĂТРА ТӲЛЕ**

Çĕр-анне – пурнăç тыткăчи, пире тăрантаракан, апла пулсан унпа саккунпа килĕшӳллĕн тĕллевлĕ кăна мар, тӳлевлĕ те усă курмалла. Пĕтĕмĕшле илсен çĕр налукĕ пухас ĕç япăх пурнăçланать. Налук пухăннипе вара пирĕн экономикăпа социаллă аталану тӳрремĕнех çыхăннă, çакă вăл муниципалитет бюджечĕ – апла пулсан ялхула пурнăçĕ. Çĕрпе аренда мелĕпе усă курнăшăн тӳлемелли укçа парăмĕ вара пирĕн районта кăна сакăр миллион тенкĕ! Енчен те çак укçа-тенкĕ хăй вăхăтĕнче пухăнсан тата унпа тĕллевлĕ усă курсан чылай ĕç тумалла. Ял çынни вара шыв пăрăхĕ хумалла е асфальт çул сармалла тесе хăшкăлать. Хальлĕхе тӳлев парăмне вăраха янă çынсене уйрăммăн пĕлтерес ĕç пырать.

Çавăн пекех еткерлĕхе кускарман хуçалăх, пурлăх, тĕрлĕ категориллĕ çĕр лаптăкĕ чылай. Пурлăх хуçи çĕре кĕнĕ, апла пулин те чылайăшĕ тĕрлĕ сăлтава пула ăна саккунпа килĕшӳллĕн регистрацилес ĕçе вĕçне çитермен. Апла пулин те унпа ыттисем усă кураççĕ, çакă та налук, бюджет укçи-тенкипе çыхăннă. Хальлĕхе вара регистрацилемен пурлăх сывлăшра кăна.

– Пурте пĕлетпĕр, çĕрпе усă курнăшăн тӳлемелли налук калăпăшĕ пысăк мар. Вăхăтра тӳлеменнисемпе вара килĕшĕве татмалла, çакна саккун ыйтать, – терĕ Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи управленийĕн ертӳçин тивĕçне пурнăçлакан О. Никина.

**НУМАЙ АЧАЛЛИСЕНЕ – ÇĔР ЛАПТĂКĔ ТАТА ЫТТИ ТЕ**

Саккунпа килĕшӳллĕн виççĕмĕш тата ун хыççăнхи ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕпе тӳлевсĕр тивĕçтермелле. Ку ыйтупа ЧР пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕн министрĕ Светлана Енилина калаçрĕ. Августăн 1-мĕшĕ тĕлне выранти хăй тытăмлăх органĕсенче 2147 нумай ачаллă çемье çĕр лаптăкĕ илмеллисен черетĕнче тăрать. Уйрăмах Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар хулисенче, Шупашкар районĕнче учетра тăракансем нумай, анчах та унпа тивĕçтересси тĕрлĕрен пырать. Муркаш районĕнче те асăннă çемьесене çĕрпе тивĕçтерес ĕç çителĕксĕр пурнăçланать, хальлĕхе çакă республикăри вăтам кăтартуран самай пĕчĕк.

– Халĕ Мăн Сĕнтĕр тата Катькас ял тăрăхĕсенче нумай ачаллă çемьесем валли 40 лаптăк хатĕрлетпĕр. Август уйăхĕнче вĕсен кадастр паспорчĕсене илмелле. Çитес вăхăтра ку ыйтăва татса пама тăрăшатпăр, – шантарчĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев.

Асăннă категорири çĕр лаптăкĕ çемьене инфраструктура тĕлĕшпе тивĕçтермелле. Унта газ тата çутă сечĕсем пулмалла. Районта ку енĕпе пысăк чăрмав пур. Хăш-пĕр ялсем санитари зонин территорине (выльăх масарĕ) лекеççĕ. Районта ун йышши ял 68.

Çавăн пекех 2012 çулта район администрацийĕ çынсене пурăнмалли çурт-йĕр çĕклеме услови туса парас тĕлĕшпе ĕçлет. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене ку тĕлĕшпе генеральнăй план тума хушу панă. Çитес вăхăтра çак ыйтăва пăхса тухма анлă канашлу ирттермелле.

Район территорийĕ 84,5 пин гектар çинче вырнаçнă. Ял хуçалăх тĕллевлĕ çĕр – 61,7 пин гектар, 11 пин гектар – вăрман тата шыв фончĕн лаптăкĕ, 7,4 пин гектар – ял тăрăхĕсен. Ял хуçалăх тĕллевлĕ çĕрĕн 21,6 пин гектарĕ яланлăх тата вăхăтсăр усă курмалли калăпăш, вăл шутра 16,3 пин гектар – халĕ ĕçлекен хуçалăхсен, 5,3 пин гектар – панкрута тухнисен.

Районти 8166 çын 0,6-шер гектар çĕр лаптăкне арендăна илнĕ. Паянхи кун тĕлне райадминистрацин пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен пайĕ пĕлтернĕ тăрăх 1000-шĕ кăна килĕшӳ тунă. Ыттисем вара çĕр лаптăкĕн документне саккунпа килĕшӳллĕн йĕркелемен.

Çавăн пекех калаçу пай çĕрĕсене харпăрлăха куçарасси пирки пулчĕ. Районта июлĕн 31-мĕшĕ тĕлне 1436 çын пай çĕрĕсене харпăрлăха куçарнă. Унăн пĕтĕмĕшле калăпăшĕ 6204 гектарпа танлашать. Çакă пĕтĕмĕшле хисепĕн 27 процентĕ кăна пулать. Харпăрлăха куçарманнисем (невостребованные) – 11461 пай. Унăн калăпăшĕ 21699,46 гектар е 73 процент. Ку енĕпе ытларах тимлемеллине, ăнлантару ĕçне анлăлатмаллине палăртрĕ Михаил Игнатьев.

Хăш-пĕр ял тăрăхĕсенчи çĕрпе çыхăннă иккĕленӳллĕ килĕшӳ, ытти документ тĕлĕшпе район прокуратури тĕрĕслев ирттернĕ. Çитменлĕхсене тата йĕркене пăснин факчĕсене палăртассипе ĕç малалла пырать. Çакна район прокурорĕ С. Фирсов пĕлтерчĕ. Çавăн пекех республика Пуçлăхĕ ял тăрăхĕсен, ытти ĕçченсен шухăш-кăмăлĕпе паллашрĕ.

– Эпир пурте – патшалăх влаçĕн ответлă ĕçченĕсем. Çавăнпа та чи малтан гражданинăн саккунлă правине тĕрĕс хӳтĕлемелле, муниципаллă орган, патшалăх влаçĕн интересĕ те тĕп выранта пулмалла. Эпĕ коррупципе спекуляцие аталантарма, йĕркесĕрлĕхе пуç пулма ирĕк памăп. Çак енне сулăннисем вара тивĕçлипех явап тытĕç. Раççей тата Чăваш Республикин саккунĕ пуриншĕн те пĕрре пултăр, – терĕ Михаил Игнатьев канашлăва вĕçленĕ май.

**ЮСАВ ĔÇĔ ПАЛĂРТНĂ ВĂХĂТА ВĔÇЛЕНĔ**

Кун йĕркинче пăхса тухма палăртнă ĕç Муркашри вăтам шкулта тăсăлчĕ. Кунта эпир пынă самантра юсав ĕçĕн хĕрӳ тапхăрĕ пыратчĕ. Республикăн ятарлă программипе апатлану блокне оптимизацилеççĕ. Ятарлă хушупа çакăнти столовăя юсама 940 пин тенкĕ ытла уйăрса панă, сĕтел-пукан туянма – 350 пин тенкĕ ытла. Унсăр пуçне кунта "Доступная среда" федераллă программăпа килĕшӳллĕн пăхнă ĕç вăя кĕрет е çакă сывлăх тĕлĕшпе хавшакрах ачасем валли кирлĕ условисем тăвасси пулать. "Сире çакă тивĕçтерет-и?", – пулчĕ Михаил Игнатьевăн ыйтăвĕ.

– Вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле юсав ĕçне тĕпĕ-йĕрĕпе вĕçлеме шантаратпăр, – пулчĕ район администрацийĕн вĕрентӳ тата çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕн З. Дипломатовăн хуравĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**
**Н. ПАВЛОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Граждансене – тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ

## Çынсен интересĕсене тĕпе хурса

***Нумаях пулмасть массăллă информаци хатĕрĕсенче Раççей Федерацийĕнче тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парасси пирки федераллă саккун йышăнни пирки информаци пулнăччĕ. Асăннă саккун Чăваш Республикинче мĕнле пурнăçланать-ха? Кун пирки ЧР юстици министрĕ Надежда ПРОКОПЬЕВА каласа пама кăмăл турĕ.***

**– Надежда Викторовна, тархасшăн, каласа парăр-ха, граждансене тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕпе тивĕçтерес тĕлĕшпе халĕ мĕнле ĕçсем туса ирттереççĕ тата нумаях пулмасть Чăваш Республикин Адвокатсен палатипе мĕнле килĕшӳ тунă?**

– Çапла, Конституципе килĕшӳллĕн кашни гражданинăн квалификациллĕ юридици пулăшăвĕ илме право пур. Саккунпа пăхнă уйрăм тĕслĕхсенче вара юридици пулăшăвĕ тӳлевсĕр те пулма пултарать.

ЧР Патшалăх Канашĕн черетлĕ улттăмĕш сессийĕнче Чăваш Республикин «Чăваш Республикин 2012 çулхи тата планланă 2013 тата 2014 çулсенчи республика бюджечĕ çинчен» Саккунне улшăнусем кĕртнĕ. Унпа килĕшӳллĕн республика 5,2 миллион тенкĕ социаллă хушма тăкаксем хăй çине илнĕ. Ку вăл республикăри хӳтлĕхсĕр çынсене тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ панăшăн адвокатсен услугисене тӳлеме каять. Кунпа пĕрлех ятарлă килĕшӳ тунă.

**– Надежда Викторовна, тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕпе камсем усă курма пултарĕç-ха?**

– Вĕсен шутĕнче пĕчĕк тупăшлă çемье членĕсем, хӳтлĕхсĕр, ватă çынсем, инвалидсем т. ыт. те. Вĕсен тулли списокне 2011 çулхи ноябрĕн 21-мĕшĕнче йышăннă «Раççей Федерацийĕнчи тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ çинчен» Федераллă саккунăн 20-мĕш статйинче, Чăваш Республикин 2012 çулхи мартăн 30-мĕшĕнче йышăннă «Чăваш Республикинчи тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ çинчен» Саккунăн 6-мĕш статйинче те палăртнă.

**– Ку категорисене лекекенсене тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕпе пур ыйтупа та тивĕçтерессĕ-и?**

– Хăш чухне тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ пама кирлине Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парасси çинчен» Саккунра асăннă.

**– Кун пек право пур граждансем епле йышши юридици пулăшăвĕ илме пултараççĕ-ши?**

– Хăйсене интереслентерекен ыйтупа консультаци илме, заявлени, çăхав, ходатайство тата право ыйтăвĕсемпе çыхăннă ытти документсем хатĕрлеме ыйтма пултараççĕ. Кунсăр пуçне вĕсен интересĕсене судсенче, патшалăх тата муниципаллă органсенче хӳтĕлеме тивĕç.

**– Тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕпе камсем тивĕçтерĕç?**

– Законодательствăпа килĕшӳллĕн вĕсен шутне Чăваш Республикинче патшалăхăн тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парассин системине кĕрекен ĕç тăвакан влаç органĕсем, вĕсене пăхănса тăракан учрежденисем, хăйсен компетенцине кура патшалăхăн тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парассин системинчи адвокатсем, кунпа пĕрлех нотариуссем кĕреççĕ. 2012 çулта тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ паракан адвокатсен списокне ЧР Адвокатсен палати республика Юстици министерствине тăратнă, Чăваш Республикин Юстици министерствипе Адвокатсен палатин сайтĕнче вырнаçтарнă.

Муркаш районĕнче тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕпе çак адвокатсем тивĕçтереççĕ: **Надежда Алексеевна Егорова** (Муркаш, Мир урамĕ, 9-мĕш çурт, тел.: 8-906-383-01-00, 8-908-851-92-36); **Владимир Вячеславович Иванов** (Муркаш, Мир урамĕ, 9-мĕш çурт, тел.: 8-906-383-01-00); **Валерий Александрович Сорокин** (Муркаш, Мир урамĕ, 9-мĕш çурт, тел.: 8-906-383-01-00, 8-906-380-91-30).

**– Гражданин кирек хăш адвокатран та тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ ыйтайрать-и?**

– Пĕтĕмĕшле списокра кăтартнă кирек хăш адвокатăн тӳлевсĕр услугипе те усă курма юрать.

**– Юридици пулăшăвĕ васкаварлă кирлĕ чухне мĕн тумалла?**

– Пурнăçри йывăр ларутăрăва лекнĕ граждансене тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕпе тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парассин патшалăх системине кĕрекен ĕç тăвакан влаç органĕсемпе патшалăх учрежденийĕсем, кунпа пĕрлех адвокатсем те тивĕçтереççĕ.

Кун пек чухне тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ ыйтса гражданин ĕç тăвакан влаç органне е патшалăх учрежденине заявлени çырса парать. Енчен те пулăшу адвокатран кирлĕ пулсан, Чăваш Республикин Юстици министерствине заявленипе пымалла.

Гражданинăн хăй кам пулнине ĕнентерекен документпа пĕрлех пĕр тăхтаса тăмасăр юридици пулăшăвĕ кирлĕ пулнине çирĕплетекен документ та тăратас пулать.

## Мĕнле ыйтусемпе пулăшу илме пулать?

I. Тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕн патшалăх системинче шутланакан адвокатсем Чăваш Республикин «Чăваш Республикинчи тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ çинчен» Саккунăн 6-мĕш статйинче палăртнă категорисенчи граждансене право ыйтăвĕсемпе сăмах вĕççĕн каласа та, çырса парса та пулăшу параççĕ. Вĕсем валли заявленисем, çăхавсем, хута кĕнисем (ходатайствăсем) тата ытти право документсем çавăн чухне тата çав ыйтусемпе хатĕрлесе параççĕ:

1. Куçман пурлăхпа çыхăннă килĕшӳ тĕлĕшпе заключени тунă, килĕшĕве улăштарнă, пăрахăçланă, саккунлă мар тесе палăртнă пулсан (енчен те хваттер, пурăнмалли çурт е вĕсен пайĕ гражданинăн е унăн çемйин пурăнмалли пĕртен-пĕр вырăнĕ шутланать пулсан).

2. Пурăнмалли çурт-йĕр харпăрлăхне палăртсан, социаллă найм шучĕпе пурăнмалли çурт-йĕр уйăрса парсан, пурăнмалли çурт-йĕрĕн социаллă наймĕн килĕшĕвне пăрахăçласан тата чарса лартсан, пурăнмалли çурт-йĕртен кăларса ярсан (енчен те хваттер, пурăнмалли çурт е вĕсен пайĕ гражданинăн е унăн çемйин пурăнмалли пĕртен-пĕр вырăнĕ шутланать пулсан).

3. Çĕр участокĕн харпăрлăх правине палăртсан тата вăл сыхланса юлсан, çĕр участокĕпе вĕçĕм тата ĕмĕр тăршшĕпех усă курмалли право пулсан (енчен те тавлашуллă çĕр участокĕ çинче гражданинăн е унăн çемйин пурăнмалли пĕртен-пĕр вырăнĕ шутланакан пурăнмалли çурт вырнаçнă пулсан).

4. Потребительсен прависене хӳтĕлессипе (коммуналлă услугăсемпе тивĕçтерессин ыйтăвĕсемпе).

5. Енчен те ĕç паракан ĕç килĕшĕвĕ тума килĕшмесĕр Раççей Федерацийĕн Ĕç кодексĕпе палăртнă гарантисене пăсать пулсан, каялла ĕçе вырнаçтарассипе, ĕç укçине, вăл шутра хăйĕнчен килмен сăлтавпа пулнă прогулшăн, шыраса илессипе, ĕç паракан хăйĕн тивĕççĕр ĕçĕпе мораль тĕлĕшĕнчен сиен кӳнĕшĕн компенсаци шыраса илессипе.

6. Гражданина ĕççĕррисен шутне кĕртессипе тата ĕççĕррисене паракан пособипе тивĕçтерессипе.

7. Çын ĕçре вилнипе, сусăрăннипе е ытти тĕлĕшпе сывлăхне сиен кӳнипе çыхăннă сăтăра саплаштарассипе.

8. Социаллă пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерессипе, пĕчĕк тупăшлă граждансене патшалăх социаллă пулăшăвĕ парассипе, пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата коммуналлă услугăсемшĕн тӳлеме субсидисем парассипе.

9. Ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕсене, инвалида тухнине тата çемьере тăрантаракана çухатнине пула паракан пенсисене, çие юлнипе тата ача çуратнăшăн, ĕççĕрлĕхшĕн, ĕçре сусăрăннăшăн е професси чирĕпе чирленĕшĕн, ача çуратнăшăн пĕр хут паракан пособие, ачана пăхса пурăннăшăн уйăхсерен паракан пособие, çынна пытарма паракан социаллă пособие памалла тăвассипе, çĕнĕрен шутлаттарассипе тата шыраса илессипе.

10. Ашшĕ е амăшĕ кам пулнине палăртассипе, алимент шыраса илессипе.

11. Политика репрессийĕсене пула шар курнă граждансене реабилитацилессипе.

12. Ĕçлеме пултараслăх шайне палăртассипе.

13. Психиатри пулăшăвĕ панă чухне граждансен прависемпе ирĕклĕхĕсене пăсни пирки çăхавлассипе.

14. Инвалидсен медицинăпа социаллă экспертизи тата реабилитацийĕпе.

15. Патшалăх влаç органĕсен, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тата должноçри çынсен акчĕсене судсăрах çăхавлассипе.

II. Тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕн патшалăх системинче шутланакан адвокатсем судсенче, патшалăх тата муниципаллă органсенче, организацисенче Чăваш Республикин «Чăваш Республикинчи тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ çинчен» Саккунĕпе килĕшӳллĕн çавăн чухне граждансен интересĕсене хӳтĕлеççĕ:

1. Енчен те вĕсем çакăн йышши ĕçсене пăхса тухнă чухне истецсем е ответчиксем пулсан:

– куçман пурлăхпа çыхăннă килĕшĕве пăрахăçланă, саккунлă мар тесе палăртнă чухне, куçман пурлăха патшалăх регистрацийĕ тунă чухне, çак правăна патшалăх регистрацийĕ тума килĕшмен чухне (енчен те хваттер, пурăнмалли çурт е вĕсен пайĕ гражданинăн е унăн çемйин пурăнмалли пĕртен-пĕр вырăнĕ шутланать пулсан);

– пурăнмалли çурт-йĕр харпăрлăхне палăртнă чухне, социаллă найм шучĕпе пурăнмалли çурт-йĕр уйăрса панă чухне, пурăнмалли çурт-йĕрĕн социаллă наймĕн килĕшĕвне пăрахăçланă тата чарса лартнă чухне, пурăнмалли çурт-йĕртен кăларса янă чухне (енчен те хваттер, пурăнмалли çурт е вĕсен пайĕ гражданинăн е унăн çемйин пурăнмалли пĕртен-пĕр вырăнĕ шутланать пулсан);

– çĕр участокĕн харпăрлăх правине палăртнă тата вăл сыхланса юлнă чухне, çĕр участокĕпе вĕçĕм тата ĕмĕр тăршшĕпех усă курмалли право пур чухне (енчен те тавлашуллă çĕр участокĕ çинче гражданинăн е унăн çемйин пурăнмалли пĕртен-пĕр вырăнĕ шутланакан пурăнмалли çурт вырнаçнă пулсан).

2. Енчен те вĕсем çакăн йышши ĕçсене пăхса тухнă чухне истецсем (заявительсем) пулсан:

– алимент шыраса илнĕ чухне;

– çын ĕçре вилнине, сусăрăннине пула е ытти тĕлĕшпе сывлăхне сиен кӳнипе çыхăннă сăтăра саплаштарнă чухне;

– граждансем тĕлĕшпе судра ĕçлеме пултараслăх шайне палăртассипе заявлени пăхса тухнă чухне;

– политика репрессийĕсене пула шар курнă граждансем тĕлĕшпе – вĕсене реабилитацилессин ыйтăвне татса панă чухне;

– граждансем тĕлĕшпе судра психиатри госпитальне сипленме ирĕксĕрлесе вырнаçтарассин е унта тытса усрамалли вăхăта тăсассин ыйтăвне пăхса тухнă чухне.

III. «Раççей Федерацийĕнчи адвокат ĕçĕ-хĕлĕ тата адвокатура çинчен» Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕн патшалăх системине кĕрекен адвокатăн Федераллă саккунпа пăхнă тĕслĕхсенче хушусене пурнăçлама ордер пулмалла. Ăна адвокатсен пĕрлешĕвĕ парать. Ытти тĕслĕхсенче тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕн патшалăх системине кĕрекен адвокатăн хăйĕн шаннă çыннин интересĕсене хӳтĕлеме доверенноç илмелле.

## Камсем тивĕçеççĕ, çавна валли мĕнле документсем кирлĕ?

Тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ илес тесен гражданинăн е унăн представителĕн тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парассин патшалăх системинче шутланакан адвоката пулăшу ыйтса заявлени, паспорт е çын кам пулнине ĕнентерекен ытти документ, гражданин Чăваш Республикин «Чăваш Республикинчи тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ çинчен» Саккунăн 6-мĕш статйипе пăхнă аяларах асăннă хăш категорие кĕнине çирĕплетекен документ памалла:

**1. Çемье членĕ пуçне тупăш республикăра палăртнă пурăнма кирлĕ минимумран (халĕ вăл 5391 тенкĕ) пĕчĕкрех тивекен граждансем, пурăнма кирлĕ минимумран сахалрах тупăш илекен пĕччен пурăнакан çынсем** – социаллă хӳтлĕх пайĕ панă çемье е пĕччен пурăнакан çын пĕчĕк тупăшлă пулнине çирĕплетекен справка.

**2. I тата II ушкăн инваличĕсем** – медицинăпа социаллă экспертизăн федераллă патшалăх учрежденийĕ панă инвалидноçа çирĕплетекен справка.

**3. Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсем, Раççей Федерацийĕн Геройĕсем, Совет Союзĕн Геройĕсем, Социализмла Ĕç Геройĕсем** – удостоверени копийĕ.

**4. Инвалид ачасем, тăлăх ачасем, ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнă ачасем тата вĕсен саккунлă представителĕсем, енчен те вĕсем ачасен прависемпе саккунлă интересĕсене хӳтĕлессипе пулăшу ыйтаççĕ пулсан** – ачан – Раççей Федерацийĕн гражданинĕн паспорчĕн е çын кам пулнине çирĕплетекен ытти документ копийĕ, опекăпа попечительство органĕ панă ача статусне çирĕплетекен справка, медицинăпа социаллă экспертизăн федераллă патшалăх учрежденийĕ панă инвалидноçа çирĕплетекен справка (инвалид ачасем валли).

**5. «Ватта сулăннă граждансемпе инвалидсене социаллă пулăшу парасси çинчен» Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ илме право пур граждансем** – социаллă пулăшăвăн стационарлă учрежденийĕнче пурăнни çинчен асăннă учреждени панă справка, медицинăпа социаллă экспертизăн федераллă патшалăх учрежденийĕ панă инвалидноçа çирĕплетекен справка (инвалидсем валли).

**6. Асăрхаса тăманнисен тата правăна пăсас енне сулăннисен профилактикин учрежденийĕсенчи çул çитмен çамрăксем, ирĕкрен хăтарнă çул çитмен çамрăксем тата вĕсен саккунлă представителĕсем, енчен те вĕсем çул çитменнисен прависемпе саккунлă интересĕсене тивĕçтерес тата сыхлас ыйтусемпе тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ ыйтаççĕ пулсан** (уголовлă суд ĕçĕ-хĕлĕнче пулăшу парасси кунта кĕмест) – çул çитмен çамрăкăн – Раççей Федерацийĕн гражданинĕн паспорчĕн е çын кам пулнине çирĕплетекен ытти документ копийĕ, çул çитмен çамрăка асăрхаса тăманнисен тата правăна пăсас енне сулăннисен профилактикин учрежденийĕнче тытса усрани пирки асăннă учреждени́рен панă справка.

**7. Раççей Федерацийĕн «Психиатри пулăшăвĕ парасси тата граждансен пулăшу панă чухнехи прависен гарантийĕ çинчен» Саккунĕпе килĕшӳллĕн тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕпе усă курма право пур граждансем** – учреждени е психиатри пулăшăвĕ паракан панă справка.

**8. Суд хăйĕн ĕçĕсемшĕн явап тытма пултараймасть тесе палăртнă граждансем тата вĕсен саккунлă представителĕсем, енчен те вĕсем çакăн пек граждансен прависемпе саккунлă интересĕсене тивĕçтерес тата сыхлас ыйтусемпе тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ ыйтаççĕ пулсан** – хăйĕн ĕçĕсемшĕн явап тытма пултарайман çыннăн паспорчĕн е çын кам пулнине çирĕплетекен ытти документ копийĕ, çын хăйĕн ĕçĕсемшĕн явап тытма пултарайманни пирки суд йышăнăвĕ вăя кĕнин копийĕ.

Тӳлевсĕр юридици пулăшăвне представитель урлă ыйтнă чухне кунсăр пуçне вăл кам пулнине тата унăн полномочийĕсене çирĕплетекен документсем кирлĕ.

Граждансем тата вĕсен представителĕсем тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ илме хăйсен пуçарăвĕпе ытти йышши документсем те тăратма пултараççĕ.

# Чиркӳ хăйĕн сассине пачĕ



**– Паян тинех ман чун лăш пулчĕ, тинех чунра лайăх. Пилĕк çул пăшăрханса пурăннине халĕ пĕрикĕ талăк лăпкăн сывăрма та пулать, – шӳтлесерех палăртрĕ хăйĕн ăшри туйăмне Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи хисеплĕ çынсенчен пĕри Зиновий Михайлович Кутузов** (сăн ӳкерчĕкре). **Пулмасăр. Ку тăрăхра пурăнакансемшĕн тахçантанпах кĕтнĕ кун çитрĕ – чиркӳ ĕçleme пуçларĕ.**

Зиновий Михайлович прихут канашĕн председателĕ пулнă май иртенпех чиркӳ таврашĕнче вак-тĕвек ĕçсем туса хыпаланчĕ. Чиркӳ тума пуçланăранпа пиллĕкмĕш çул, ĕçĕ вара пурпĕрех пур.

– Çавăн чухне «Ударник» хуçалăх ертӳçи Платон Павлович Давыдов «хускалман пулсан» паян çак вырăнта чиркӳ пулмастчĕ. Çапла çирĕппĕнех калама пултаратăп. Пăхăр-ха, мĕнле илемлĕ чиркӳ, – савăнса калаçать Зиновий Михайлович.

Христос Çӳле Çĕкленнин чиркĕвне çутатма Улатăр епископĕ Стефан – Шупашкар епархийĕн викарийĕ, Шупашкар-Чăваш епархийĕн 11-мĕш благочиннăй округĕн Сергий Чернов протоиерей тата çак округри ытти священниксем чылайăн килсе çитрĕç. Чиркĕве çутатассипе ирттерме



палăртнă службăна вăхăтра пуçларĕç – ирхи сакăр сехетре.

Малтанах чиркӳре тăватă-пилĕк çын кăначчĕ. Вăхăт кăшт кăна иртрĕ – чиркĕве халăх лăк туллиех пухăнчĕ. Ăçтан кăна килмен пулĕ çынсем: Омск хулинчен те, Арзамасран та ятарласа килнĕ. Улатăртан та пур, чиркĕвĕн куполне туса хатĕрленĕ «Плазмотех» чиккĕллĕ яваплăхлă пĕрлешӳвĕн ертӳçи те çитнĕ, Йӳçкасси, Шетмĕпуç тăрăхĕсенчен...

– Ку таранччен тăташах Уйкас Янасал чиркĕвне, Шупашкара çӳренĕ. Халĕ мĕн тери ырлăх пиреншĕн, – чунтан савăннине кусçуль витĕр палăртакансем те пулчĕç чиркӳре.

– Чиркӳре харпăр хăйне мĕнле тытмаллине те хăнăхса çитĕпĕр акă. Ку илемлĕ чиркĕве тăташах çӳрес кăмăл пур, – терĕç теприсем.

Йĕри-тавра çурта çунать, турăшсем çинчен куç каймасть, илемлĕ юрăсем çăмăллăх парнеленĕн туйăнать, лăпкăлăх... Служба пуçланчĕ. Акă часах чан сассине те илтрĕмĕр: чиркӳ хăйĕн сассине пачĕ, ăна та чун кĕчĕ. Служба йĕркине пăхăнса чиркӳ тавра турăшпа, хĕреспе çветтуй шыв сапса çаврăнчĕç. Таса чиркĕве священнослужительсем хыççăн хура халăх та кĕчĕ.

– Кунта малтан больница пулнă, халĕ вара Турăн ырăлăхĕпе, тивлечĕпе чиркӳ туса лартма май пулчĕ. Çын ӳт-пӳрен кăна мар, чунран та тăрать. Ӳт-пӳ вилсен те чун – ĕмĕрлĕхе. Турă пиреншĕн кашниншĕн килнĕ, кашнин вилĕмсĕрлĕхĕшĕн. Çакна асра тытса чиркĕве çӳрĕр, кĕлтăвăр. Хăвăршăн, ачăрсемшĕн, асăр-аннĕрсемшĕн, тен хăшĕсем сирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлнă пулсан та.

Куратăр, туятăр пулĕ, çамрăксен кăмăл-сипечĕ тĕлĕшĕпе паян лару-туру питĕ сивĕ. Çамрăксем тата питĕ нумайăн вилеççĕ. Халăх Турăран «инçе». Эсир вара Турăпа пĕрле пулăр. Турă пире кашнинех çăлать, анчах пиренсĕр мар. Çакăнта çӳрĕр, кĕлтăвăр.

Çапла пулчĕ Стефан епископăн служба хыççăнхи сăмахĕ. Вăл «пиренсĕр мар» тенине архиерей грамотисене тивĕçнĕ çынсем пурри çирĕплетрĕ. Чиркĕве туса хута ярассинче маларах асăннă Зиновий Михайлович Кутузов, «Ударник»



хуçалăх ертӳçи Платон Павлович Давыдов, Василий Андреевич Степанов предприниматель тивĕçрĕç çак чыса. М. Кутузов пĕлтернĕ тăрăх чиркӳ тăвассинче Геннадий Петрович Сергеев электросварщикăн тӳпи те пысăк. Тул енчен ниçта та тимĕр курăнман чиркĕвĕн стенисем ăшĕнче çӳллĕшĕпех тимĕр швеллерсем çирĕплетсе тытăнтарса тухнă вăл.

Ку чиркĕвĕн настоятелĕ Николай атте çак кунах, 16 сехетре, служба пуласса пĕлтерчĕ. Тепĕр кун вара – çветтуй Илия пророк кунĕнче – çынсем литургие килме пултарассине каларĕ. «Халăх мĕнле – чиркӳ настоятелĕ те çапла. Эсир лайăх пулсан çак чиркĕвĕн настоятелĕ те лайăх пулать, паллах», – çапла пĕтĕмлетӳ туса Стефан епископ халăха пил пачĕ. Вăл каланă сăмахсене кунта кашниех ăша хывни палăрчĕ...



# Ильинка Илия пророк кунĕнче савăнчĕ

**Ильинка ял тăрăхĕнче пурăнакансемшĕн çветтуй Илия пророк кунĕ яланах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă: Атăл хĕрринчи илемлĕ вырăнти чиркӳ хăйĕн престол уявне паллă тунă. Халĕ кунта часовня-храм туса лартассипе тимлеççĕ. Ĕмĕртен пынă ырă йăласене чĕртсе тăратмаллине халăх та ăнланса илнĕ ĕнтĕ.**

Вунă сехетре Тренккăран Ильинка салине велосипедпа ярăнакансен ушкăнĕ вирхĕнчĕ. Старта ача-пăча кăна мар, аслисем те активлă хутшăнчĕç. Утмăлтан иртнĕ Анна Ивановна Кузьмина та акă дистанцие çил пек шăхăрса çитрĕ. Чăннипех те хаваслă старта хутшăнакансенчен чи асли пулчĕ вăл. Финиш йĕрĕ урлă пурте каçрĕç, кашнинех кăмăлĕ савăк. Малти вырăнсене йышăннисемшĕн вара тата савăнăçлăрах самант: депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В. Кожанов, уявăн тĕп йĕркелӳçи, грамотăсемпе укçан парне парса чысларĕ. Валерий Иванович стартра хăй те ырă тĕслĕх кăтартрĕ.

Кăнтăрла иртнĕ икĕ сехет тĕлнелле Тренккăна таçтан та килсе çитнĕ çынсем пĕр вырăна пухăнчĕç. Шупашкар-Чăваш епархийĕн 11-мĕш благочиннăй округĕн протоиерейĕ Сергий атте, Муркашри кĕлĕ çурчĕн настоятелĕ Федор атте килсе çитрĕç. Акă хĕреспе, турăшсемпе Ильинкăна çула тухма пĕтĕмпех хатĕр. Çынсем те пил илме ĕлкĕрчĕç. Хĕреспе турăшсем йăтнă халăх тапранчĕ. Виç çĕр çынна яхăн çын... Асфальт çул тăрăх вĕсен вăрăм речĕ тăсăлать – вăй питти çынсемпе танах ача-пăча та, туя тытса утакан та. Çул тăршшĕпе халăх татах хушăнса пычĕ. Ильинкăри часовнях-храм патне çитиччен Турра савса, тав туса, кĕлтуса юрларĕç.

– Турра юратнă Илия пророк идолсене пуççапассине питĕ çирĕппĕн хирĕç тăнă, чăн тĕне сарас тесе чылай ĕç пурнăçланă. Пирĕн те çак чăн тĕншĕн кĕлтумалла. Çын ĕненӳсĕр пĕтет. Çак храма туса пĕтермеллех пултăрччĕ. Сирĕн çак чиркӳре кĕлтума, Турра савса юрлама май пултăрччĕ, – çапла каларĕ Сергий атте çынсене çветтуй шывпа сирпĕтнĕ май.

Часах кунта çын юлмарĕ – хĕреспе, турăшсемпе çула тухнисем пурте Атăл хĕрринчи сăваплă Хĕрес патне утрĕç. Кĕлĕ иртрĕ.



Мăнаçлă Хĕресрен инçех мар сцена, тем вăрăмăш сĕтел, ача-пăчана савăнма – вăйă площадки... Ильинкăсем уява тĕплĕн хатĕрленнĕ: Тренккăри Культура çурчĕ çумĕнчи юрăпа ташă ансамблĕ те, шкулта вĕренекенсем те, Шупашкартан çитнĕ «Забава» ушкăн та сцена çине тухма хатĕрленеççĕ, сĕтелсем çывăхĕнче çулăм çине çакса янă пысăк хурансенче пулă шӳрпи пиçет, квас тутанса пăхма сĕнеççĕ. Атăл шывĕ тăрăх вара кимĕсем, баржăсем иртеççĕ...

Илемлĕ вырăнта пурăнаççĕ Ильинкăсем. Çакна сцена çине саламлă сăмахпа тухса калаçнă район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев та, Чăваш Республикин Гостехнадзор патшалăх тĕп инспекторĕ В. Димитриев та палăртрĕç.

– Маттурсем! Ырă йăласене чĕртсе тăратма тăрăшатăр. Ильинка тăрăхĕ яланах хастар çынсемпе пуян пулнă. Паян та акă Валерий Иванович Кожанов тăрăшни куç умĕнчех. Ильинка тăрăхĕ хăйĕн илемлĕхĕпе пĕрлех инвестицисем хывма питĕ меллĕ территори. Çавăнпа та малашнехи ырă ĕçсене те пĕрлех пурнăçламалла пирĕн, – çапла палăртрĕ Ростислав Николаевич.

Владимир Павлович вара уява савăнăçлă иртттерме сĕнниnе пĕрлеш ĕç çин ответлă тапхăрĕ пулнине те аса илтерчĕ.

Ку тăрăхри чи хисеплĕ çынсене, нумай çул пурăнакансене – В. Чигиревăна, Т. Максимовăна, Н. Таймаскина – сцена çине чĕнсе парнесем парса чысларĕç.

Илемлĕ юрă-кĕвĕ пĕрин хыççăн тепри янăрарĕ сцена çинче, хаваслă ташăсем халăха пĕр вырăнта лартмарĕç. Çамрăксем шыв çинчи йĕлтĕрпе ярăнчĕç, ача-пăча батут çинчен анма пĕлмерĕ. Атăл хĕрринче чĕртнĕ пысăк кăвайт тавра халăх карталанса юрларĕ, ташларĕ, савăнчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**





# Кил тата хушма хуçалăх



## "Тивĕçлĕ кану хушма хуçалăхра ытларах тăрăшма май парать"

Çак кунсенче манăн Муркаш салинчи Терехинсен хуçалăхĕнче пулма тӳр килчĕ. Картишне кĕрсенех куçа илемлĕ чечексен пуххи, унтан та ытларах йĕри-таврари тирпейлĕх тыткăнларĕ – тăрăшуллă çынсем пурăннин палли ку. Исĕм çырли тунисем ав сурт ăн иккĕмĕш хучĕ таранах улăхнă, катаранах симĕс, кăвак çимĕç илĕртет. Унтан аяккарах лаштра туратлă, йĕтайми çимĕçлĕ грушăсем, улмуççисем тата ытти йывăçсем ӳсеççĕ, чылайăшне вара тĕрев лартнă.



Çавăн пекех тепĕр самант куçа курăнчĕ: пĕр йывăç çинче те типнĕ тата кирлĕ мар ытлашши турат çук – йăлтах тирпейлĕ, чăн-чăн сад-пахча ăсти хуçаланать пулас кунта. Пĕр груша йывăççи çинче темиçе тĕрлĕ сорт сыпнă, пурте чĕрĕлнĕ. Кам-ха кунта сирĕн сад-пахча ăсти тесе кăсăклантăм эпĕ.

– Ку ĕçпе йăлтах Виктор Александрович тимлет, – терĕ Валерия Ивановна мăшăрĕ çине ăшă кăмăлпа пăхса, эпĕ вара в ы л ь ă х - ч ĕ р л ĕ х п е ĕçлетĕп.

– Тивĕçлĕ канăва тухни хушма хуçалăхпа татах та тачăрах пулма май парать. Малтан вара канăва тухиччен тăтăш ĕçре пулнă, кил-тĕреш валли вăхăт çитеймен. Халĕ картишĕнче ĕçлесе ĕшеннĕ хыççăн ав пахчари сулхăна кайса тавралăхпа, уçă сывлăшпа киленсе ларма та вăхăт пур. Акă кану кĕтесĕ те кунтах, – калаçăва малалла тăсрĕ вăтăр ултă çул районти çыхăну уйрăмĕн ертӳçинче тăрăшнă Виктор Александрович. Чăнах та садра киленме майĕ çителĕклĕ: пулă шӳрпипе (хăйсем тытнипе), шашлыкпа, пыл чейĕпе сăйлан кăна.

Шăпа çемье пуçне Тутар Республикинчи Зеленодольск хулинчен Муркаш салине илсе çитернĕ. Аслă пĕлӳ илнĕ хыççăн кунта ĕçлеме янă. Çапла вара пурнăç телейне пĕрле тупма тĕв тунă çамрăксем ĕçчен те тирпейлĕ çемье, хăтлă кил-çурт çавăрнă. Вĕсен виçĕ ывăлĕ ашшĕ-амăшĕнчен ыррине кăна вĕреннĕ. Халĕ кунта Терехинсен çирĕп йăхне тăсакан кĕçĕн ывăлĕ тата унăн çемйи пурăнать – çапах та тĕп йĕркелӳçĕсем – Виктор Александрович тата Валерия Ивановна. Çуллахи вăхăтра вара кунта çичĕ мăнукĕ вĕсене савăнăç кӳрет.

Юлашки çулсенче выльăх-чĕрлĕх усракан сахалланчĕ. Çамрăксем те ку еннелле ытлах пăхасшăн мар. Асăннă çемье вара аслисен йăлине çирĕп тытать. Ĕни-сысни те, кайăк-кĕшĕк те вĕсемшĕн чăрмав мар. Экологи тĕлĕшĕнчен таса апат-çимĕçпе усă курнине мĕн çиттĕр ĕнтĕ.

Хушма хуçалăха хăйсен сывăхĕнчи тĕрлĕ йывăç татах та ытларах илем кӳрет. Картишĕнче кăна мар, урамра та тăрăшуллă çын алли пулни сисĕнет. Çамрăк йывăççене выльăх-чĕрлĕх çĕмĕресрен карта тытнă, маларах лартнисем вара самай ӳснĕ.

– Килти йывăçăн хăрнă тата кирлĕ мар туратине кăна мар, урамри йывăçсене те тирпейлесех тăратăп эпĕ, – тет сад-пахча ăсти.

Вĕсем тивĕçнĕ çитĕнӳсене те асăнмасăр иртес килмест. Тирпейлĕ хушма хуçалăх конкурсра "Чи лайăх хуçалăх" номинаци çĕнтерӳçи пулнă. Килĕшуллĕ мăшăра вара "Чи лайăх çемье" ят пĕрпĕрне малашне татах та ытларах хисеплесе пурăнма хавхалантарнă. Виктор Александрович "Почетный радист СССР" (1977 ç.), "Заслуженный радист" (1997 ç.) ятсене тивĕçнĕ. Унсăр пуçне тĕрлĕ шайри Хисеп грамотисем, парнесем вĕсен тăрăшулăххех çирĕплетеççĕ. Апла пулсан вĕсем пирĕншĕн, уйрăмах çамрăксемшĕн, ырă тĕслĕх вырăнĕнче.

Хисеплĕ çынсем пурнăç çулĕпе пĕрле утма пуçланăранпа хĕрĕх икĕ çул тултарнă ĕнтĕ. Пĕрпĕрне çур сăмахран ăнланни тата сума суни кĕске самантрах курăнчĕ. Тивĕçлĕ канăва тухнă мăшăра малашне те çирĕп сывлăхпа пурăнма сунас килет.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

# ПАХЧАÇАНА

## Явăнакан çĕр çырли пулать-и?

Çĕр çырли юратман çын çук та пулĕ. Юлашки çулсенче пахчаçăсене тухăçа ӳстермешкĕн явăнса ӳсекен çĕр çырлин калчисене сĕнеççĕ. Анчах та «Россельхознадзорăн» ĕçченĕсем кунашкал рекламăна ĕненме тăхтама хушаççĕ.

Рекламăна шанас тăк «Вьющаяся», «Гигантелла», «Альбион» текен çĕр çĕрлисем пĕр сезонра 3-4 хутчен тухăç пама пултараççĕ, çырлисем 100 грамм таранах ӳсеççĕ иккен, садра кăна мар, балкон çинче те аванах аталанаççĕ-мĕн.

Анчах та çакнашкал «чаплă» сортсене Селекци çитĕнĕвĕсен патшалăх реестрĕнче тупаймăр. Çавна май Федераци 1997 çулхи раштав уйăхĕн 17-мĕшĕнчи «Вăрлăх туса илесси» 149-мĕш саккунĕн 30-мĕш статйипе килĕшӳллĕн вĕсене Раççей Федерацийĕн территорийĕнче сутма юрамасть.

2010 çулта «Россельхознадзор» ыйтнипе Федерацин монополипе кĕрешекен службиа «Беккер» ООО-на тата центрти хаçатсенчен пĕрне çут çанталăкра çук «Вьющаяся», «Гигантелла» сортсен калчисене сутни пирки пĕлтерекен рекламăшăн административлă майпа явап тыттарнă.

Апла пулин те халĕ те «явăнса ӳсекен çĕр çырлин» рекдами хаçатсенче тĕл пулкалать. Çав-çавах та асăннă ведомство асăрхаттарăвне шута илнĕ тесе каламалла – халĕ «сорт мар» тесе çыраççĕ.

**Надежда ВАСИЛЬЕВА,**
**Раççейри ял хуçалăх надзорĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн специалисчĕ.**

## Сирĕн пахчара кабачок пур-и?

Хаçатри «Кил тата хушма хуçалăх» кăларăмра тăтăшах тĕрлĕ сĕнӳ тухать. Мана уйрăмах апат-çимĕç хатĕрлеме вĕрентнисем кăмăла каяççĕ. Çавăнпа эпĕ те хаçат вулакансене хам сĕнӳпе паллаштарас терĕм.

Чылайăшĕ пахчара кабачок лартса ӳстерет. Эпĕ çамрăккипе те, ӳсе çитнипе те çимĕç пĕсерне çĕрте анлă усă куратăп.

Çамрăк кабачок ăшалама питĕ меллĕ, ăна ахаль çиме те, иккĕмĕш апат çине хума та пулать. Çакна валли чи малтанах чуста хатĕрлемелле. Хăймапа е майонезпа пĕрле çăмарта, тăвар пăтратмалла, çăра хăйма евĕр пуличчен çăнăх хушмалла. Çӳхе сийсем çине каснă кабачока чуста ăшне чиксе кăлармалла та çу янă çатма çинче сараличчен ăшаламалла. Вĕттĕн туранă ыхрана хăймапа е майонезпа хутăштарсан татах та техĕмлĕрех пулать.

Ӳсе çитнĕ, хуппи хытма пуçланă кабачокран вара шаркку тума пулать. Ăна валли çĕр улмипе кабачок пĕр виçепе илмелле, кишĕр, сухан, фарш, тăвар ямалла та духовкăна лартмалла. Плита çинче вăрахăн çулăмпа та лайăх пиçет.

## Сахăрсăр компот

Эпĕ чылай çул сахăрсăр компот тăватăп. Ăна кирек епле çырларан та хатĕрлеме пулать. Тăватă пая каснă пан улмие çунă тата вĕрилентернĕ кантăк савăта тултаратăп, çиеле вĕрекен шыв яратăп. Çакăн хыççăн ăшă шыв янă кастрюле лартатăп. Кантăк савăтри шыв чакать пулсан унта татах та хушмалла, тепĕр вăхăт вĕрекен шывлă кастрюльте тытмалла. Çакăн хыççăн компот савăтне кăлармалла та тимĕр хупăлчапа çирĕп хупмалла. Сывлăш тухнине пĕлме тепĕр майлă çавăрса лартмалла.

Сахăрсăр тунă компот та аванах упранать. Ăна тĕрлĕ улма-çырларан хатĕрлеме пулать.

**Л. СЕМЕНОВА.**

Катькас ял тăрăхĕ.

## Çĕнĕ çĕр улми: пахчаран – сĕтел çине

### Хушма хуçалăх пуянлăхĕ

Çанталăк тимлĕхне пула кăçал çĕр улми тухăçĕ лайăххи халех курăнать. Çимĕç йышлă мар пулин те шултăра. Хăшĕсем çĕр улмие июлĕн 21-мĕшĕнче, Казански праçникĕнче, кăларса çиеççĕ. Теприсем вара Илем кунĕнче, августăн 2-мĕшĕнче.

Çак çимĕçе ахальтен мар "иккĕмĕш çăкăр" тетпĕр. Ку чăннипех те çавăн пек. Вăл çын организмĕшĕн чи усăллă çимĕç тата куллен кирлĕ элементсен пуххи. 100 грамм йывăрăшлĕ çĕр улмире С витамин 20 мг. Унăн шайĕ вара вăхăт иртнĕçемĕн чакать. Асăрхатпăр вĕт çур çултан çимĕç калăпăшĕ еплерех пĕчĕкленет, çакăнпа танах витамин тытăмĕ те.

Шывра пĕсернĕ хупăллă çĕр улми чылай усăллă, пăспа пăшăхтарни ытларах та, апла пулин те сарă çупа ăшаланă çимĕçех кăмăллатпăр. Çĕр улми уйрăмах халĕ, çамрăк вăхăтра, питĕ усăллă. Унтан чылай тĕрлĕ çимĕç хатĕрлеме пулать. Хăшĕсемпе паян хаçат тусĕсене паллаштарасшăн.

#### ÇĔР УЛМИ ТĂПĂРЧĂПА ТАТА ХĂЙМАПА

Хупăлчапа хупласа 15 минут пĕсернĕ çĕр улми шывне тăкмалла та каллех çулăм çине 1 – 3 минутлăх лартмалла. Кун пек тусан савăт тĕпĕнчи шыв типет, пиçсе çитеймени вырăнтан вырăна ылмашăнса пиçсе çитет. Пĕсернĕ çĕре тăвар хушма ан манăр, унсăрăн хăшĕпĕри ирĕлсе çурăлма пултарать. Çур стакан хăймана 100 грамм тăпăрчăпа хутăштармалла, тăвар сапмалла, лайăх пăтратмалла та турилкке çине вĕри çĕр улмипе хурса памалла.

#### СĔТПЕ ÇĔР УЛМИ

Хуппинчен тасатнă çĕр улмие тăвар янă шывра пĕçермелле. Шултăрине варринчен касмалла, вĕттине аплипех ямалла. Пĕсернĕ шывне тăксан хупăлчине 5 минутлăх уçса савăта пĕчĕк çулăм çине лартмалла. Çавăн пекех çимĕç пиçсе çитес умĕн лавр çулçи е укроп пуçĕ яма пулать. Кун пек вăл ырă шăршăллă пулать. Турилкке çине хунă вĕри çĕр улми çине ирĕлтернĕ услам çу ямалла е касăкĕпе те хума юрать, вăл пур пĕрех ирĕлет. Çакăнтах ăшаланă пуçлă е симĕс сухан хушмалла. Кунпа пĕрле вара сивĕ сĕт-турăх питĕ вырăнлă.

Тута-сăвара чĕпĕтекен çимĕç кăмăллакансемшĕн вара çĕр улмипе горчица техĕмлĕ пулĕ. Çĕр улми пĕсернĕ хыççăнхи çур литр шыва савăта ярăр. Унта пĕр апат кашăкĕ чухлĕ горчица хушăр, пĕчĕк çулăм çине хупăлчапа витсе пилĕк минутлăх лартăр. Çĕр улми çине хурса памалли соус пулчĕ те. Вĕрилле çиме питĕ тутлă, çак çимĕçе уйрăмах арçынсем кăмăлласçĕ.

#### ПĔТНĔКПЕ ÇĔР УЛМИ

Çĕр улми пиçнĕ хыççăн шывне тăкăр та пĕтнĕк тунипе çулçине ярăр. Пăспа пиçсе хăйне майлă техĕмлĕ çимĕç пулать.

#### ПЫЛАК ÇĔР УЛМИ ТУТАНМĂР-И?

Тăвар хушнă шывра 12 –15 минут 600 грамм чухлĕ вĕтĕ çĕр улми пĕçермелле. Пысăк савăта 60 грамм сахăр песукĕ ямалла, 3 литр шыв хушмалла. Пĕчĕк çулăм çинче çăра сироп пуличчен пĕçермелле, çĕр улмие унта ямалла. Кăштах лартнă хыççăн пылак çимĕçе çатма çинче сараличчен ăшаламалла.

#### ÇĔР УЛМИ СЫРПА ХУТĂШ

Пĕр виçеллĕ пĕр килограмм чухлĕ çĕр улмие тасатса çӳхе касăксем тумалла (вĕçне çитиех касса кăлармалла мар), çу сĕрнĕ тарăн çатмана хурса кашнин çине тăвар, пăрăç, çу хумалла. Çиелтен сырпа сапмалла та духовкăна лартмалла.

Çапах та тин кăна пĕçернĕ çĕр улмие кăшт кăна тăварланă хăярпа çиме никам та хирĕç мар пулĕ. Ку çимĕç туссемпе уçă сывлăша тухсан та, сĕтел хушшинче çиме те питĕ тутлă.

## Сасăсăр кăвакал усрани усăллă

Килте эпĕ мускус кăвакалĕ усратăп. Ăна усрани чăннипех те тупăшлă тесе шухăшлатăп.

Пĕрремĕшĕнчен, унăн ашĕ ытти кăвакалсемпе танлаштарсан 3 – 4 хут çусăртарах. Апла пулсан вăл уйрăмах тĕрлĕ чире пула çуллă аш çимен çынсемшĕн, ачапăчашăн лайăх. Сăнран пăхма унăн какайĕ тĕксĕмрех курăнать пулин те, çиме сĕтеклĕ тата тутлă.

Иккĕмĕшĕнчен, вăл ахаль кăвакалта танлаштарсан апат сахалтарах çиет. Ăна пысăк тутлăхлă апат кирлех мар. Çăнăхпа хутăштарнă кăшман çулçине, вĕлтĕрене лайăх çиеççĕ, ытти те тиркемеççĕ.

Виççĕмĕшĕнчен, вĕсен сывлăхĕ самай çирĕп. Хăйсен сассипе ыттисене чăрмантармаççĕ. Çавăнпа та ку кайăка сасăсăр кăвакал теççĕ.

Ăна валли юхан шыв питех кирлĕ мар. Çăвăнма вара савăтри шыв та çитет, мĕншĕн тесен вĕсем пурте хăрăç çăвăнмаççĕ, черет пăхаççĕ.

Сасăсăр кăвакал хăй пусма ларса чĕпĕ кăларать, çу касçипе вара икĕ хутчен те. Çавăн пекех ытти кайăккĕшĕк çăмартине те хурса пама юрать. Малтан тухнă чĕпĕсене амăшĕнчен иртерех уйăрсан çăмарта тума та маларах пуçлать. Пĕрре кăларнă чухне 14 – 16 чĕпĕ кăларма пултарать. Чĕпĕсем пилĕк эрнерен тухаççĕ.

Кашни ама валли уйрăм йăва кирлĕ. Унăн йăви патне шăппăн калаçса пымалла, унсăрăн вăл сасăпа хăраса йăвана пăрахма пултарать. Çăмартана вара вăл курман чухне илмелле.

Пусма ларнă тапхăрта ун умĕнче çителĕклĕ чухлĕ апат, шыв пулмалла. Çиме тухсан вăл тӳрех çăвăнса кĕрет. Çакă питĕ кирлĕ. Çăмартасене амăшĕ хăй нӳрĕкĕпе йĕпетсен чĕпĕсем пĕр харăс тухаççĕ. Тин кăна тухнă чĕпĕсене хăй айĕнче типнĕçемĕн илмелле, пурте тухса пĕтсен вара каялла амăшĕ патне ямалла.

Малтанхи кун чĕпĕсене пĕсернĕ çăмарта, курăк турасa памалла. Амăшĕ чĕпписене кӳрентерме памасть. Икĕ кунтанах вĕсем амăшĕпе пĕрле хурт-кăпшанкă, ешĕл курăк çиеççĕ. 2 – 3 эрне çитиччен чĕпĕ урине йĕпетме юрамасть.

**Т. МАЛОВА.**

Ятман ялĕ.

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**ДОРОГИЕ ЖИТЕЛИ СЕЛА МОРГАУШИ И МОРГАУШСКОГО РАЙОНА!**

10 августа 2012 года с 10.00 до 14.00 час. в центре села Моргауши перед гастрономом Моргаушского райпо проводится ШКОЛЬНАЯ ЯРМАРКА.

Предлагается широкий ассортимент канцелярских товаров, школьно-письменных принадлежностей, одежда и обувь для школьников.

На ярмарке будет культурно-развлекательная программа с аниматорами, игровой аттракцион, батут.

Для будущих первоклассников будет проводиться акция «Первый раз в первый класс» с вручением подарка при покупке школьной формы с предъявлением свидетельства о рождении ребенка. 1-2.

**МЫ ОТКРЫЛИСЬ!**

По ул. 50 лет Октября, д. 4, на 2 этаже (с. Моргауши) ежедневно с 8-00 до 19-00 час. работают магазины «Детский мир» и «Обувь» ООО «Универмаг» Моргаушского райпо. Магазины могут порадовать вас – взрослых, ваших малышей и подростков – расширенным ассортиментом одежды, размеры для всех: для новорожденных, от самых маленьких до подростков. А также в продаже современные и модные легкие трикотажные и вязаные изделия; игрушки – развивающие, развлекающие и многие другие, новые модели школьных форм, мужской и женской обуви для всех сезонов и размеров ведущих российских и зарубежных фирм. Принимаются индивидуальные заявки. Приходите, пожалуйста, радуйте себя. Тел.: 62-5-57. 1-2.

**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ: ЛЮБОЙ РАЗМЕР** 4-10.
**ТЕЛ.: 8-903-346-40-58.**

Продаем керамзитобетонные блоки, цемент, песок, гравмассу, щебень, кирпич.
Тел.: 8-960-307-41-78. 1-10.

**ВНИМАНИЮ ЖИТЕЛЕЙ СЕЛА МОРГАУШИ И МОРГАУШСКОГО РАЙОНА**

В период с 25 апреля по 31 сентября 2012 г. СУПЕРАКЦИЯ «Мы вернем вам 2500 руб. за каждое окно»

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, ВИТРАЖИ, БАЛКОННЫЕ РАМЫ, ПЕРЕГОРОДКИ**
по минимальным ценам! Москитная сетка в подарок

Срок изготовления от 3 до 5 дней. Германское качество. Пенсионерам дополнительные скидки

**ОКНА** сельский вариант от 3500 р. квартира от 5300 р.

**КОНДИЦИОНЕРЫ** от 13999 р. Продажа. Монтаж. Гарантия.

«ДАНИЛА-МАСТЕР» ул. 50 лет Октября, д. 6 (торговый центр «Универмаг», 2 этаж).
Тел.: 8-927-667-34-38, (83541)37-34-38 1-5.

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Беляев Юрий Евгеньевич, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, ул. Ториково, д. 5.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:072501:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, территория землепользования КДП «Гигант», земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:072501, площадью 1,57 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

***

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:200701:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Васильев Юрий Самуилович, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Ойкасы, ул. Кузнечная, д. 4.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:200701:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, территория землепользования СХПК им. Кирова, земельный участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:200102, площадью 1,41 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

***

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:031001:210, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Пигенешева Регина Федоровна, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Мемеккасы, ул. Центральная, д. 17.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:031001:210. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Волга», земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:030501.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

***

Поправка. В газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» № 46 (8007) от 20 июня 2012 г. в извещении о согласовании проекта межевания земельного участка Столярова Михаила Степановича, в конце четвертого абзаца, вместо «1,73 га» следует читать «1,68 га».

***

Администрация Моргаушского района информирует о предстоящем размещении ЗАО «НСС» земельного участка площадью 40 кв. м. с кадастровым номером 21:12:220201:122, местоположением: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Одаркино, для установки (антенной опоры СК-26 и контейнера) базовой станции сотовой связи ЗАО «НСС». Справки по телефону: 62-5-99.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 15-20.

Требуются водители с личным автомобилем для работы на такси в Моргаушском районе.
Тел.: 8-937-370-44-77. 2-2.

Срочно сниму жилое помещение в Моргаушском сельском поселении. Своевременную оплату, чистоту и порядок гарантирую. Тел.: 8-917-651-73-42.

ГРАВМАССА, ЩЕБЕНЬ (доломитовый, гранитный, известковый), КЕРАМЗИТ, ПЕСОК (речной, карьерный), БЕТОН с доставкой до 30 т. за 1 рейс.
Тел.: 8-927-668-70-15, 38-70-15. 14-18.

* * *

ВАСКАВЛĂ. Тăватă пăрулана хура тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-927-669-28-56, 8-927-845-03-42.

* * *

Требуются автомойщики (с. Моргауши, территория «Сельхозтехники») юноши и девушки от 18 до 35 лет, можно без опыта работы, автослесари, шиномонтажник. Зарплата достойная, своевременная.
Тел.: 8-927-844-78-33. 1-2.

* * *

Требуются маляры (возможно обучение), з/п от 10000 руб. (с. Моргауши).
Тел.: 8-987-662-31-99, звонить с 8-00 до 17-00 час.

* * *

Стоматологический кабинет ООО «Вита Дент» предоставляет 5% скидку пациентам из районов (при предъявлении паспорта): на лечение зубов, частично съемный протез, полный съемный протез.
Телефон: 8(8352)41-72-90. Адрес: г. Чебоксары, ул. М. Павлова, 64, остановка «Дом ветеранов». 3-3.

* * *

Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Тел.: 8-905-347-99-15, 67-66-95. 4-5.

* * *

Хура-шурă тĕслĕ пĕрре пăрулана ĕне сутатăп.
Тел.: 8-927-842-04-40.

* * *

Продаю автомашину ВАЗ-2115, 2007 года выпуска, в отличном состоянии. Цена договорная.
Тел.: 8-919-652-17-70.

* * *

В Нижний Новгород требуются рабочие на сборочное производство автофургонов и спецавтотехники. Вахтовый метод (две недели через две). Питание, проживание бесплатно. Выезд группами до предприятия. Соц. гарантии. З/п 25000-40000 руб. в месяц. Тел.: 8-908-766-41-45 (Н.Новгород), 8-906-38-56-82 (Чувашия). 1-5.

* * *

Ăратлă, сĕтлĕ качакасем путеккисемпе пĕрле сутатăп.
Тел.: 8-903-379-53-10.

* * *

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.
Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 5-12.

* * *

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок и замок на ручках окон. Шестикамерный профиль по цене трехкамерного. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а.
Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 5-12.

* * *

Сур çулхи ăратлă качака такисем сутатăп.
Тел.: 8-919-657-29-83. 2-2.

* * *

Требуются рабочие на уборку картофеля и повар.
Тел.: 8-910-391-98-12. 2-2.

* * *

Продаю корову. Тел.: 8-927-850-03-42.

* * *

Продаю дрова березовые и дубовые. Цена договорная. Тел.: 8-927-99-33-119.

***

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:121301:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Башмаков Валериан Матвеевич, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Иштереки, ул. Новая, д. 2.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:121301:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, общей площадью 1,31 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

***

Администрация города Чебоксары сообщает, что в целях реализации Закона Чувашской Республики от 01.04.2011 г. № 10 «О предоставлении земельных участков многодетным семьям в Чувашской Республике» предполагает приобрести земельные участки, расположенные в населенных пунктах на территории Моргаушского района. Возможно приобретение земельных участков сельскохозяйственного назначения при условии соблюдения порядка при покупке, предусмотренного Федеральным законом от 24.07.2002 г. № 101-ФЗ «Об обороте земель сельскохозяйственного назначения». Предложения с приложением копий правоудостоверяющих документов на земельные участки, ситуационные планы расположения земельных участков принимаются по адресу: г. Чебоксары, ул. Дзержинского, 20, тел.: 62-01-84.

КАНЦТОВАРЫ на рынке с. Моргауши
Товары для школы и офиса
Бланочная продукция, книги и журналы
Ксерокопия, ламинирование, тиражирование
CD, DVD диски: игры, мультики, музыка, фильмы, софт
Оптовые цены в розницу
Доставка до офиса бесплатная
Заказы принимаются по телефонам: 8(8352)38-00-22, 62-0-22 (местный)
Хиты продаж: ручка – 2 руб., тетрадь 12 л – 2,50 руб., бумага «Снегурочка» – 150 руб.

ВЫ ЗВОНИТЕ – МЫ ПРИВЕЗЕМ: цемент, блоки керамзитобетонные, профнастил, профили, трубы, уголки, утеплители, гипсокартон, поликарбонат, теплицы и многое другое. Адрес: д. Рыкакасы, т.ц. «Лотос». Тел.: 8-917-661-02-32. 6-10.

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя.**
Замер. Доставка бесплатно. Низкие цены. 1-10.
Тел.: 8-987-576-65-62.

**МЫ ПОМОЖЕМ ЗАРАБОТАТЬ!!!**
В Москву и Московскую обл. требуются ФАСОВЩИЦЫ, ГРУЗЧИКИ
Питание, проживание — БЕСПЛАТНО. Вахта. Выезд группами до предприятия. Гарантии. З/п 25 000 – 35 000 руб.
Тел.:8(8352)29-80-30, 29-50-30. 1-5.

**ЮВЕЛИРНАЯ МАСТЕРСКАЯ:**
– ремонт и изготовление ювелирных изделий из золота и серебра;
– скупка золота (цена за 1 г 850 руб.), старинных монет.
Адрес: в здании Дома быта.
Тел.: 8-927-668-85-01. 7-10.

**пластиковые ОКНА**
*Немецкое качество*
Окна STAR
6-камерный профиль ПО ЦЕНЕ 3-камерного
подробности по телефонам: 8-9603101816
скидки до 35%
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
*Окна стали дешевле...*

Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 8-10.

Ĕне, вăкăр, пĕчĕк пăру, сурăх туянатăп.
Тел.: 8-905-343-60-63. 3-10.

**ОКНА VEKA на века. Металлические двери из Йошкар-Олы. Гарантия 3 года. Под ключ.**
Тел.: 8-919-666-39-02, 8(83547)23-2-96. 3-5.

### Прогноз погоды

| | суббота 4 августа | | | | воскресенье 5 августа | | | | понедельник 6 августа | | | | вторник 7 августа | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +15 | +22 | +24 | +19 | +15 | +23 | +27 | +22 | +20 | +24 | +26 | +22 | +17 | +23 | +26 | +22 |
| Давление мм | 749 | 749 | 748 | 747 | 746 | 746 | 745 | 744 | 744 | 745 | 745 | 746 | 747 | 748 | 746 | 745 |
| Влажность % | 88 | 62 | 49 | 73 | 87 | 58 | 45 | 66 | 72 | 80 | 61 | 63 | 81 | 65 | 46 | 61 |
| Ветер м/сек | 1 | 1 | 2 | 1 | 1 | 1 | 1 | 1 | 2 | 3 | 4 | 3 | 2 | 1 | 1 | 2 |
| | С-В | С | В | С | С-В | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю-З | С-З | С | С | Ю | Ю | Ю-В |
| Солнце восход / заход | | 05:04 | 20:53 | | | 05:06 | 20:51 | | | 05:08 | 20:49 | | | 05:10 | 20:46 | |
| Луна восход / заход | | 21:04 | 08:08 | | | 21:20 | 09:25 | | | 21:37 | 10:39 | | | 21:55 | 11:52 | |

Коллектив филиала «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз» выражает искреннее соболезнование родным и близким в связи с безвременной кончиной бывшего директора
**РУБЦОВА Владимира Михайловича.**

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 3.08.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4629.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.